Спорт Спорт Спорт

Çивĕччисем çĕнтерчĕç

Майăн 1-мĕшĕнче çулсеренех районта çуллахи спорт сезонне уçасси ырă йăлана кĕнĕ. Кăçалхипе 5-мĕш çул вара асăннă ăмăрту çĕнтерӳçисем Муркаш райповĕн кубокĕпе парнисене тивĕçрĕç. Çакă асăннă райпо председателĕ Б.В. Андреев районти çăмăл атлетика федерацийĕн председателĕ пулнипе те çыхăннă. Ку çеç те мар. Юлашки çулсенче кунти çамрăксен канашĕ те питĕ лайăх ĕçлет. Районта çеç мар, республикăра та пĕлеççĕ П.А. Бирюков ертсе пыракан Муркаш райповĕнчи çамрăксен канашне. Иртнĕ çул ĕçлекен çамрăксемпе ĕçе епле йĕркеленипе ирттернĕ республикăри конкурсра "Суту-илӳ, халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сфера, суту-илӳ предприятийĕсем" номинацинче Муркашсене çитекенни пулмарĕ. Спортра та маттур кунти яшсемпе хĕрсем. Çуллахи спорт сезонне уçассине халалласа йĕркеленĕ ăмăртăва та унăн хуçисем харăсах 3 команда тăратрĕç.

Пĕтĕмпе вара район центрне çак кун 36 команда килчĕ хăйсен пултарулăхне спортра тĕрĕслеме. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вĕсене пурне те Çуркуннепе Ĕç уявĕ ячĕпе саламларĕ, старта тулли кăмăлпа тухма ырлăх-сывлăх сунчĕ.

–Кашни ăмăрту сире çитĕнӳ патне çывхарттăр, - терĕ Юрий Александрович.

Кашниех финиша малтан çитеймесен те, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Г. Данилов калашле, сывлăхшăн усăллă пултăр çак ăмăрту.

Çирĕп сывлăхпа спорт уйрăлми тачă çыхăннине вара хамăр ентешĕмĕр Т.Ю. Моисеева та çирĕплетсе парать. Кăçалхи ăмăртăва вăл та килсе çитрĕ хăйĕн пирвайхи тренерĕпе В. Ф. Киселевпа.

–Сирĕн финиша çĕнтерӳпе çитмелле пултăр, - терĕ Муркаш хĕрĕ ăмăртăва хутшăнакансене. – Тĕслĕхрен, манран тĕслĕх илĕр.

Çакăн пек калама чăннипех те тивĕçлĕ Татьяна. Астăватăпха 6 класра вĕреннĕ чух хăйĕн хĕр тусĕпе варринчи ретри малти парта хушшинче ларакан, пур предметпа та пултаруллă çак хĕрачана. Вăл ун чухнех районти ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнатчĕ.

–Пĕрремĕш хут вара йĕлтĕр çине 3 класра тăтăм, – аса илет паян тĕнче класлă спорт мастерĕ. Шкулти, унтан районти ăмăртусенче тунă çĕнтерӳсем республика, Раççей, тĕнче шайĕнчи ăмăртусен алăкĕсене уçрĕç.

Çитĕнӳ тӳрех килменнине хутăш эстафетăра 1 километра чупакан арçын ачасемпе хĕрачасем те, арçынсемпе хĕрарăмсем те лайăх ăнланаççĕ. Кăçалхи ăмăртура акă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсенчен Шомиксем чи малтан вĕçлерĕç ăмăртăва. Вĕсем хыççăнах Панклисемпе Шетмĕпуçсем вăркăнса кĕчĕç финиша. Вăтам шкулсен командисенчен вара Калайкассисем çĕнтерчĕç. 2 тата 3 вырăнсенче – Ярапайкассисемпе Чуманкассисем. Предприятисемпе организацисен 9 командинчен чи çивĕччисем "Моргаушрайбыт" чикĕллĕ явапланăлă обществăпа районти шалти ĕçсен пайĕн командисем те ку хутĕнче те спортри вăр-варлăхпа палăрчĕç: хыççăнхи парнеллĕ вырăнсене йышăнчĕç.

Муркаш райповĕн кубокĕсемпе хаклă парнисене халь çеç асăннă командăсем тивĕçрĕç.

– Пуçламăшĕ пур, малаллахи ăмăртусенче кайрисен мала тухмалăх вăхăт пур, – ăнăçу сунни вырăнне пулчĕç Юрий Александровичăн çак сăмахĕсем. Татьяна Юрьевнан та тӳрех килмен вĕт ылтăнпа кĕмĕл медальсем.

Паян акă ăмăртăва хутшăнакансенчен чи асли "Моргауши –Хлеб" чикĕллĕ явапланăлă обществăра ĕçлекен 56 çулхи Елена Романова пулчĕ. Тепрехинче çакнашкал уйрăм парнене илме ыттисен майсем пур. Ӳркенмелле мар çеç, ăмăртăва хутшăнмалла кăна. Трасса çине майăн 1-мĕшĕнче тухнисенчен чи çамрăккисем Сыпай шкулĕнчи 11 çулхи Антонпа Артем Барановсем пулчĕç. Çитес ăмăртура камсем пулĕç пĕчĕкренех спортпа туслисем? Кăна тепĕр ăмăрту хыççăн пĕлĕпĕр. Çакна вара татсах калама пулать. Районта иртекен спорт ăмăртăвĕсем йышлансах пыраççĕ çулсерен, унта ытларах та ытларах командăсем хутшăнаççĕ. Çакăнта мар-и вара асăннă мероприятисен тĕллевĕ?

Л. ПАВЛОВА.

Сăн ӳкерчĕксенче: Т. Моисеева; ăмăртури самантсем. Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче Чуманкасси шкулĕнче Чечен вăрçинче пуç хунă Л.Г. Семенова тата А.В. Димитриева асăнса чупассипе тата хăвăрт утассипе 10-мĕш хут ăмăртусем иртнĕ.

Апрелĕн 27-мĕшĕнче Москакассинче çуллахи спорт сезонне уçнă ятпа çăмăл атлетика енĕпе ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсем хушшинче мала тухассишĕн уйрăмсен ăмăртăвĕсем иртнĕ. Командăсем хушшинче Калайкасси шкулĕн команди 1-мĕш пулнă, Орининсемпе Москакассисем – 2-мĕшпе 3-мĕшсем.

Майăн 2-мĕшĕнче Муркаш шкулĕн тирĕнче вăтам шкулсенче вĕренекенсем пăшалтан тĕл пересcипе районта мала тухассишĕн вăй виçнĕ.

Майăн 7-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче, **майăн 8-мĕшĕнче** вăтам шкулсем хушшинче районта мала тухассишĕн футболла выляссипе ăмăртусем иртеççĕ. Финал ăмăртăвĕсем – майăн 15-мĕшĕпе 16-мĕшĕсенче.

Майăн 10-мĕшĕнче Калайкасси шкулĕнче вăтам шкулсем хушшинче мала тухса «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин кубокне çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетсем ăмăртăва тухаççĕ. **Майăн 11-мĕшĕнче** вара çак ăмăртăвах Калайкассинче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче ирттереççĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
любой сложности, от 3000 рублей, с установкой. Триколор – 5000 руб.
Тел.: 8-906-385-29-30. 1-8.

Продаем цемент М-400 50 кг, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58, 30-3-50. 5-5.

ЗАО «МСО «Моргаушская» приглашает принять долевое участие в строительстве 36-и квартирного жилого дома в д. Москакасы Моргаушского района ЧР.
На постоянную работу в ЗАО «МСО «Моргаушская» требуются: электрогазосварщики, каменщики, плотники.
Контактный телефон: 2-21-29. 2-2.

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер, рубероид, доски. При покупке керамзитобетонных блоков на остальной товар скидки.
Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-851-47-82. 2-2.

РУКОВОДИТЕЛЯМ ПРЕДПРИЯТИЙ, УЧРЕЖДЕНИЙ И НАСЕЛЕНИЮ
Общество с ограниченной ответственностью «Ручей» производит работы по монтажу, наладке и пуску эксплуатацию систем электроснабжения объектов любого назначения (жилые, производственные, соц. культ. быта и т. д.). Лицензия № Д535829 от 15 ноября 2004 г. выдан Федеральным агентством по строительству и жилищно-коммунальным хозяйством, а также выполняет полный комплекс испытаний и измерений электрооборудования и электроустановок напряжением до 1000В, а именно:
1. Измерение силы тока, напряжения и мощности в электрических цепях.
2. Испытание изоляции электрооборудования.
3. Наладка заземляющих устройств:
3.1. Измерения сопротивления растекания контура защитного заземления;
3.2. Проверка наличия цепи между заземлителями и заземляемыми элементами;
3.3. Замер полного сопротивления цепи «фаза-нуль-токоприемника».
4. Проверка работоспособности УЗО (ВКЗ) автоматических выключателей.
Адрес: база ЗАО «МСО «Моргаушская», д. Юнгапоси.
Тел.: 2-21-29, 32-2-23.

БЫТОВАЯ ТЕХНИКА
по оптовым ценам на заказ:
телевизоры, холодильники, СВЧ-печи, стиральные машины, электроинструменты, пылесосы, мотоблоки и многое другое.
Тел.: 8-906-385-29-30. 1-8.

МУП ЖКХ «Моргаушское» примет на работу: водителей, экскаваторщиков, электромонтеров, газоэлектросварщиков. Оплата достойная. Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Коммунальная, д. 2., тел.: 2-13-98, 2-13-74.

Продаю компьютер с компьютерным столом в отличном состоянии. Недорого.
Тел.: 8-909-305-27-62.

Продаю УАЗ, 1983 г.в., «санитарка», серый, на ходу.
Тел.: 8-902-327-30-53.

МУП ЖКХ «Моргаушское» в честь празднования 9 мая – Дня Победы объявляет о том, что 6 мая 2007 г. ветераны и участники ВОВ в Моргаушской бане обслуживаются бесплатно.

Çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе Афганистанри çапăçусене хутшăннă воин-интернационалистсен районти Канашĕ Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Кивĕ Матьăкра çуралса ӳссе действительнăй çар службинче Афганистанра пуç хунă А.Н.Порфирьевăн амăшĕ

Раиса Ивановна ПОРФИРЬЕВА

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

СХПК «Герой» коллективĕпе профсоюз комитечĕ кунта тĕп агроном пулса ĕçлекен З.Я. Макарован хуньашшĕ, М.В. Макаров водителĕн тата В.В. Макаров заправщикăн ашшĕ

Валериан Кириллович МАКАРОВ

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Дирекция МУП ЖКХ «Моргаушское» выражает глубокое соболезнование Лобачевой Нине Артемьевне в связи с кончиной

МАТЕРИ.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта акушер-гинеколог пулса ĕçлекен Н.А. Артемьеван амăшĕ

Анастасия Порфирьевна МАРКОВА

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Хаçатăн çитес номерĕ майăн 8-мĕшĕнче тухать.

Ĕç итогĕсене тишкеретпĕр

Мĕн пурнăçлани малаллах туртăнма хистет

2007 çулхи пĕрремĕш квартал ĕç итогĕсемпе паллаштарма районти шалти ĕçсен пайĕн штаб ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан милици майорĕнчен В.Г. ЯКОВЛЕВРАН ыйтăмăр.

– Шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракансем кашни çынна хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси, вĕсен саккунлă прависемпе ирĕклĕхне хӳтĕлесси, преступленисене уçса палăртасси, обществăлла йĕркелĕхе сыхласси, уйрăм çынсене тата юридици вăйĕнче тăракансене пулăшса вĕсен интересĕсене хӳтĕлесси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Оперативлă профилактика ĕçĕсене вăхăтра тата тивĕçлĕ шайра пурнăçлани районти пĕтĕмĕшле криминаллă йĕркене алхасса кайма паман тата çакă хăш-пĕр кăтартусене чакарасси çине те витĕм кӳнĕ. Вĕлерессине 50 процент, хваттерсенчен çаратассине 71,4 процент, çын сывлăхне хавшатас тесе кӳнĕ преступленисене 100 процент, хĕнессине 27,3 процент, хулиганла ĕçсене 100 процент, обществăлла вырăнсенче тунă преступленисене 81,8 процент, вăл шутра урамра тунисене 90,0 процент чухлĕ сахаллатма май килнĕ.

Тĕрлĕ сăлтавсене пула çапах та преступлени тăвасси ӳсет. Виçĕ уйăх хушшинче районта 135 преступлени регистрациленĕ. Çакă иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 7,1 процент ытларах.

Уйрăмах йывăр преступленисен шутне кĕрекеннисене 100 процент уçма пултарнă. Йывăр преступленисене уçасси 83,7 (71,1) процент, вăтам йывăрăшлисене 51,5 (43,5) процент, пĕчĕк йывăрăшлисене 87,4 (86,9) процент уçнă.

Оперативлă «Шырав» ушкăнĕ йĕркене пăснă 12(11) факт тупса палăртнă, 12 преступлени уçма пултарнă.

Преступленисене пĕтĕмĕшле уçасси 4,3 процент чухлĕ ӳснĕ е вăл 74,5 (70,2) процентпа танлашать. Преступленисене уçасси республикăри вăтам кăтартуран 13,6 процент ытларах. Çавăн пекех хисепĕпе те самай ӳснĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăрта 106 преступлени уçнă пулсан, кăçалхи кăтарту 140-пе танлашать. Çапах та çакă лăпланса лармаллине пĕлтермест.

Виçĕ уйăх хушшинче ниçта те ĕçлеменнисем 95 (57), ушкăнпа 42(15), ӳсĕрле 32(39), унччен судпа айăпланнисем 32(30) преступлени тунă.

Кăçалхи тата иртнĕ çулта шута илнĕ 15 преступник шыравра пулнă, вăл шутран 7-шне шыраса тупнă. Хыпарсăр çухалнă 6 çын шыравра шутланнă, 4-ĕпе ĕç ăнăçлă вĕçленнĕ. Çул çитмен 1 çамрăк шыравра пулнă, ăна тупнă.

Профилактика йĕркисене йышăннă май обществăлла вырăнсенче пурнăçланă преступленисене 81,8 процент, урамра тунисене 90,0 процент чухлĕ чакарма май килнĕ. Обществăлла вырăнсенче тунă преступленисене уçасси вара ӳснĕ. Обществăлла хăрушсăрлăх енĕпе пĕтĕмĕшле тунă преступленисене уçасси 69,3 (67,3) процент пулнă.

Шалти ĕçсен пайĕнче учета илнĕ 360 çын шутланать. Унччен суд тунă, ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчен таврăннисем 142 (139) çын. Сывлăха сыхлас учрежденисенче учетра тăракан, йĕркене пăсакан алкоголиксемпе наркомансем 37 (26) шутланаççĕ. Çемьере харкашу, хирĕçӳ кăларакансем 65 (59) çын. Айăпланнисем, анчах та ирĕкрен хăтарманнисем 103 (106).

Саккуна пăсса эрех сутассине чарасси паянхи куна çивĕч ыйту пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе прокуратура ĕçченĕсемпе рейдсем ирттеретпĕр. Уйрăмах çул çитмен çамрăксем çине тимлĕх уйăратпăр. Пĕтĕмĕшле вара 133 (135) тĕрĕслев ирттернĕ.

Сутуçăсене алăран тытас тĕлĕшпе ятарласа спирт пур шĕвексене туяннă. Пĕтĕмпе вара ку енĕпе йĕркене пăсакан 25 (29) çынна шута илсе явап тыттарма тивнĕ. Çавăнпа та эрех, сăмакунпа суту-илӳ тăвакансем пирки тĕрлĕ информаци пухассине те вăйлатнă.

Çул çитмен çамрăксем преступлени тăвасси, çавăн пекех вĕсене усал ĕçе явăçтарассине чарасси кулленхи тимлĕхре тăрать. Çул çитмен çамрăксем тунă 14(9) преступлени регистрациленĕ. Пĕтĕмпе вара учетра 55 çамрăк тăрать. Вăл шутран 19(15) çамрăка март уйăхĕнче шута илнĕ. Çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе 64(54) протокол çырма тивнĕ.

Ăнăçсăр çемьесен шутĕнче 12(10) çемье тăрать. Ашшĕ-амăш прависенчен хăтарас тĕлĕшпе 5(5) материал пухнă. Вĕренӳ заведенийĕсенче 52(51) хутчен калаçу ирттернĕ. Çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм тăрăшнипе 4 преступлени тупса палăртнă. 25 ăнăçсăр çамрăка шалти ĕçсен пайне илсе килме тивнĕ.

Шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ автобуссемпе çӳрекен 24(16) автоçула тĕрĕсленĕ. Çавна май 24(14) предписани çырса тата çулйĕре йĕркелĕхре тытман должноçри 6(4) çынна административлă майпа явап тыттарнă. Çул-йĕр çинче 14(12) синкер ĕç регистрациленĕ, вĕсенче 2(4) çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă, 23-ĕн (18) аманнă. Пĕтĕмĕшле 566(535) протокол çырма тивнĕ. Вăл шутран ӳсĕр пуçпа руль умне ларнă 6(5) çын пулнă. Çак уйрăм ĕçченĕсем тăрăшнипе 4(3) преступлени уçса пама пултарнă.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 2,0 п. листа. Тираж 3511.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 04.05.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру МАКАРОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.